# Тури Вылти Архипов Севастиан

/Баллада/

**Юрий СЕМЕНТЕР**

Аннесем кӑмакана ҫӑкӑр хывнӑ майлах
Севастьян яшлӑхне вӑрҫа хыврӗ йӑлтах.
Пӗр пайне вӑл хӑварчӗ Мускав патӗнче,
Тепӗр пайӗ ҫӳрет Сталинград уйӗнче.

Ыттисем - Курск енче. Венӑра, Прагӑра,
Рейхстаг ҫийӗн вӗл-вӗл вӗлкӗшет
ялавра...
Ма хитре ҫуркуннен ытарми йӑл кулли?
Ма тесен вӑл - Ҫӗнтерӗвӗн ырӑ палли!

«Севастьян! - ыталатчӗ ӑна ротӑри
молдаван. -
Эсӗ - Атӑл ҫинчи парӑнман арӑслан.
Ҫапӑҫса чунсӑрлатрӑн фашист хурахне,
Эс кӑлартӑн тӳрре ҫут тӗнче шанӑҫне».

«Ҫук, Ион, - тет ӑна Элӗк ҫӗрӗн каччи, -
Пирӗн туслӑх - ак мӗн Ҫӗнтерӳ туптави».
Чӑнкӑ-чанкӑ тӑвать ҫичӗ орден-медаль,
Ҫӗмӗрле хыҫа юлчӗ, хыҫа юлчӗ Шӑхаль.

Тӑр-тӑри вирхӗнсе ҫӗкленет йӑвинчен, -
Севастьян килсе ҫитрӗ тӗнче вӑрҫинчен!
Акӑ кивӗ хапха, Тури-Вылӑм, салам!
Чим-ха, мӗн ку? Ҫуннӑ, кӗлленнӗ урам...

Вӑрҫӑра та пушарччӗ, ялта та пушар,
Эй, аттеҫӗм, аннеҫӗм, хирӗҫ тух,
сасӑ пар!
Ҫӗнтерсе киле килчӗҫ пулсан ачӑрсем
Ҫӗнӗрен ҫӗкленеҫҫӗ тӑван суртӑрсем!